# ВӐРМАН-ПИРӖН ПУЯНЛӐХ

- Вăрман – пирĕн пуянлăх. Вăл нумай çимĕç парать: мăйăр, çырла, кăмпа...
- Вăрман – чĕр чунсемпе кайăксен çурчĕ.
- Вăрман – пирĕн тус. Вăл нӳрĕке тытма пулăшать, çакă вара çынна пахча çимĕç, тыр-пул илме май парать.
- Вăрман – пирĕн планетăн «ӳпки». Вăрманти йывăç-кукăр çав тери нумай кислород кăларать тата кăмрăк йӳçĕ газне çăтать.
- Вăрман сывлăша тусанран тасатать.
- Вăрман юхан шывсемпе кӳлĕсене упрать.
- Вăрман строительство материалĕсем парать.



# Юман



Юман- нумай çул ӳсекен çирĕп, усăллă йывăç. Промышленноçра, строительствăра усă курнисĕр пуçне унпа халăх медицининче те анлăн усă кураççĕ. Пирĕн тăрăхра ĕлĕк-авалтанпах юман вăрманĕсем йышлă пулнă. Халĕ вĕсем республикăра 150 пин гектар шутланаççĕ. Анчах та, вăрманçăсем çулсеренех çамрăк хунавсем нумай лартса хăвараççĕ пулин те, юманлăхсен лаптăкĕ пĕчĕкленсе пырать.

# Хурăн



Çĕр çинче пурĕ 120 тĕрлĕ хурăн ÿсет. Ĕлĕк хурăна çурхи уявсемпе сыхăнтарнă. Çуркунне, кунсем ăшăтсан, мăнкун хыççăн тепĕр 7 эрнерен çимĕк уявĕ пулнă, вырсарни кун вара – Тройца. Çимĕкпе Тройцăна вăрман сывăхĕнче уявланă. Хĕрсем хурăнсене лентăсемпе, пуç кăшăлĕсемпе тата гирляндăсемпе илемлетнĕ, хурăн йĕри-тавра çаврăннă, халăх юррисене юрланă.



# Чăрăш

Ку йывăçа ачасем мĕн пĕчĕкренех пĕлеççĕ. Унпа пĕрле эпир Çĕнĕ çула кĕтсе илетпĕр. Чăрăшсене капăрлатасси – тахçантанпах пыракан йăла.  Ĕлĕклех кунсем вăрăмланма пуçласан  çысем вăрманалла утнă, чи пысăк чăраша  теттесемпе илемлетнĕ. Çакă вара хирте тыр-пул паха пулассине, вăрманта кайăксемпе чĕр чунсем йышлă пулассине пĕлтернĕ. Килĕсене те чăрăш турачĕсене илсе таврăннă.



# Çăка

Çăка ытти йывăçсемпе хутăш ŷсме юрататъ. Чăваш республикинче çăкалăхсен лаптăкĕ – 40 пин гектар ытла. Ку йывăç 150-200 çул пурăнатъ. Хăш-пĕр çăкасем 30 метр çŷллĕшнех çитеççĕ. Çăка уссине каласа пĕтерме те çук. Хурт-хăмăр ăстисемшĕн вăл – чи лайăх йывăç. Çăка 10-12 кун хушши чечекре ларатъ. Çак хушăра 1 гектар çăка вăрманĕнчен пыл хурчĕсем 1000 кг таран пыл пухаççĕ.



# ВĔРЕНЕ

Вĕрене – урамсене тата парксене илем кĕрекен йывăç. Унăн çулçисем кĕрхи вăхăтра питĕ илемлĕ. Вĕрене туни питĕ çирĕп, унпа промышленноçра тата строительствăра усă кураççĕ. Флейта текен музыка ăсталанă çĕрте те юрăхлă. Хуласенче вĕрене сывлăшри таса мар япаласене хăй çине илет.

# Вăрманти вĕçен кайăксем

**Кăсăя** пĕр кун хушшинче хăй мĕн йывăрăш, çавăн чухлĕ хурт-кăпшанкă çиме пултарать.

**Тăмана** пĕр çулталăк хушшинче пинĕпех шăши тытать.





**Кукăр сăмса** хĕлĕпех хырпа чăрăш вăррипе тăранса пурăнать. Чĕпписене те хĕлле пусса кăларать.

**Сар кайăк –** тĕлĕнмелле вĕçен кайăк. Вăл сайра йывăçлă вăрманта пурăнать. Пирĕн пата апрельте вĕçсе килет.







# Чĕкеç

Хура куçлă, пĕчĕк пуçлă,
Эреветлĕ те теветлĕ,
Шыва кĕтĕм те чŷхентĕм,
Пĕрре чăмрăм, пăчăнтăрр! ...
Çŷçсем пухрăм, йăва турăм
Пит илемлĕн те йĕркеллĕн.
Эреветлĕн те теветлĕн,
Юр юрларăм, пăчăнтăрр! ...



# УЛАТАККА

Улатакка так-так-так!
Йывăçа таккарĕ:
«Тĕрĕслес кăна пăртак,
Шĕкĕ ернĕ мар-и?
Тасатас ăна хуртран,
Ырă-сывă ŷстĕр,
Ан чирлетĕр ăнсăртран,
Сив хĕле те тŷстĕр».

# Вăрманти чĕр чунсем



Чее тус пырать утса,
Хӳрипе йĕрне шăлса.
Шăшисене вăл тытать.
Чăхсене те юрататъ.



Хĕлле шурă,
Çулла сăрă.
Никама та хăратмасть,
Пуринчен те хăй хăрать.





Вăрманта  йĕплĕ çăмха выртать.



Хӳри тукмак, шăлĕ шак-шак.



# Пакша

Йывăç тăрăх сиккелет
Çăмламас пакша.
- Эй, пăх-ха: илемлĕ те, -
Тетĕп юлташа.
Хăвăлне кĕрсе каять,
Мăйăр шĕкĕлчет;
Каялла сиксе тухать,
Чăйлатса илет.
Клентĕр евĕр хӯрине
Кукăртайнă хăй,
Шăп пĕр çуллăх мăйăрне
Пуçтарайнă хăй.

# Хĕрлĕ кĕнеке

Вăрманти чĕр чунсене те виçесĕр тытмалла мар. Халĕ ятарлă правилăсене кăтартнă вăхăтра тата палăртнă чухлĕ çеç тытма юрать. Анчах та вăрмансене ытлашши касса пĕтернине, сунара çŷремелли йĕркене пăснине пула чылай чĕр чун – çŷлевĕç, карăк, пăчăр – çав-çавах хăрушлăхра.

Раççейĕн Хĕрлĕ Кĕнекине кĕртнĕ ŷсен-тăрансемпе чĕр чунсене уйрăмах хытă упрама йышăннă. Вăрман тăрăхĕнче заповедниксем йĕркеленĕ.

